К С(чув)
Ю41
25914-чув

Сăвăсем

Геннадий
ЮМАРТ

ТĔРЕК

Национальная библиотека ЧР
4-025914

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М 25914 губ

Моргаушская т. З. 1253 Т. 10.000

Геннадий
ЮМАРТ

К С(4чв.)
Ю41

Тĕрек

САВАСЕМ

Шупашкар
Чăваш
кĕнеке
издательстви
1983

С(Чув)2
Ю 41

М 25914 чув
Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Юмарт Г. Ф.
Ю 41 Тёрек. Сăвăсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1983 ç., 48 с.

Тăван халăх ăс-хакăлĕн пуянлăхне, тăнăç пурнăçпа çутçанталăка упрасси-сыхласси сăвăçа тарăн шухăша ярать. Халăхсен туслăхĕ, этем тивĕçĕ тата пархатарлă юрату çинчен çырнă сăвăсем те кĕнекене чылай пуянлатаççĕ. Г. Юмарт шухăша çивĕчрех калама фольклор сăнарĕсемпе, сюжечĕсемпе тата мелĕсемпе анлă усă курать.

С(Чув)2

Ю $\frac{4803010200-041}{М\ 136(03)-83}$ 07—83

ПРОВЕРЕНО
2010

©Чăваш кĕнеке издательстви, 1983 ç.

УЛĂПСЕМ

Г. Н. Волкова

Пулнă, тет, чăвашăн улăпсем.
Мĕн туса чап илнĕ-ха вĕсем?
Пурăннă иккен сĕм-авалах,
Хапăлланă ырă хавала.
Пулнă, тет, вĕсем шултра, патвар,
Атлантсем пек вăйлă та хастар.
Çичĕ çухрăм пулнă, тет, утти,
Çичĕ чалăш тăршшĕ — çăпати.
Хăтлăх кӳнĕ хăтсăр тĕнчене,
Тытнă имĕш пурнăç тыткине.
Пĕлĕте çĕкленĕ, тет, çӳле —
Ирĕккĕн хăйсем çӳремелле.
Ăшăнмашкăн тупнă кăварне,
Шăрăх чух çутарнă çумăрне.
Вырăнтан куçарнă, тет, тăва,
Çĕн çулпа юхтарнă, тет, шыва.
Тĕнчене шыв илнĕ те — талай
Шавласа тăрайнă, тет, чылай.
Пур чĕрчун пĕтес патне çитсен,
Улăп çăлнă, тет, путассинчен:
Хывнă та вăл хăйĕн кĕпине,
Мăшăршар тултарнă ун ăшне.
Тытнă, тет, пĕр вăхăт пĕлĕтре,
Шыв чаксан, антарнă, тет, çĕре.
Пулнă, тет, кĕпи асамлăскер,
Çитмĕл çич тĕспе тĕрленĕскер.
Иксĕлми вăй панă — хĕн килсен,

Çĕнеймен никам та — кĕрешсен.
Улăп хăваланă тăшманне —
Татăлма паман тăван йăхне.
Йыхăрсан та ют çĕре Мерчен,
Вăл кайман çуралнă çĕрĕнчен.

Савнă çĕрĕ пулнă хаклăрах,
Чăн телейĕ — хамăр халăхра.
Улăп ватăлса шуралнă та
Вырăн тупнă чаплă масарта:
Пĕчĕкçĕ ту евĕрлĕ тĕми
Нихăçан йăшса çĕтми-пĕтми.
Çав тĕме çине ларса кансан,
Иксĕлми вăй-хал кĕрет-мĕн сан.
Йывăрлăх килсен çĕршывăма,
Улăп хатĕр чĕрĕлсе тăма.
Çилçунатлă шурă утпала
Çĕкленсе вара вăл тухмалла.
Улăпăн тăпри асамлă, тет:
Хытнă анана иккен имлет.
«Мул тăпри» тесе вара ăна,
Ывçăн-ывçăн сапнă пахчана...
Улăп йăхĕнчен эпир, туссем!
Улăпла — эпир тăвас ĕçсем.
Халăх вăй илет улăпсемпе,
Пурăнар вĕсен хавалĕпе!
Тулăхрах сапса мул тăприне,
Имçамлар-и пурнăç йывăçне!

РАЗИН ЧĔЛĔМĔ

Халăх халапĕ

Атăл тăрăх анать кервенкке шухă кимĕ,
Çуй тумасăр пыраççĕ паян хусахсем.
Ах, аманнă иккен хусахсен утаманĕ!

Жигули тăвĕсем çумĕпе иртнĕ чух
Ан кĕрейрĕ ăна. Ту çине тинкерӳçĕн:
— Ку мĕнле çӳллĕ ту? — тет, пуçне çĕклесе.
Жигули хырçисем. Паттăрсен ту хысакĕ...
— Ай, чипер курăнать!.. Хăпарар ун çине!..
Хусахсем, чарăнса, ун çине улăхаççĕ,
Ик енчен хулленрех çĕклесе Разина.
Утаман таврана сăнаса çаврăнать те
Ыратан аллипех чĕлĕмне кăларать:
— Шăллăмсем! Чĕлĕме çак тăва халаллатăп.
Ту тăрне çĕр алтса хăваратăп хурса:
Мăкăрлантăр — таçтан та таçтан курăнайтăр.
Чĕлĕме тупакан тăсĕ пирĕн ĕçе...
Утаман сукмакран инçех мар пытарать те,
Хусахсем хускалаççĕ каллех ким çине.
Ун çине вырнаçса çеç вĕсем ĕлкĕрейрĕç —
Ту тăрри тĕтĕмпе тĕтĕре те пуçлать.
Пулнă, тет, пит асамлă çав тĕтĕм темекĕ *,
Тупнă, тет, утаман ăна хăй те таçтан...
Капан пек çĕкленен тĕтĕме кам ан куртăр!
Чĕлĕме вăрахчен выртăрман, тет, вара...
Ахăртне, çавăнпа пăлхавсем тăтăш тухнă,
Пусмăра хирĕçлет пусмăрти ĕççынни.

ВĂРМАН АМĂШĔ

Уйăх çĕкленсессĕн, каçхине,
Сăнаса пăхсам вăрман çине:
Çӳллĕ, çӳçлемес мĕлке, тен, курăн —
Улăп евĕр иртмĕ-и маттуррăн?
Пулнă, тет, вăрманăн амăшĕ —
Йывăç пурнăçне упрамăшĕ.
Илтĕнмĕ-и вăл хӳхленĕ хӳхĕ?

* Темек — табак.

Тен, вăл мар-и,— ўхĕрĕ, тен, ўхĕ...
Йывăçсен сыхчи хăех-и, тен,
Кукленсе ларса хўхлет-и, тен:
«Кам-ши алхасса кунта çўренĕ,
Манăн ачана касса ўкернĕ?
Çитĕнсе çитмешкĕн те паман,
Ентĕ мĕнлерех çăлас-ха ман?..
Вăрмансем йăшсан — этем те йăшĕ,
Манăн йыш ўссен — ўсет ун йышĕ...»
Те вăрман илейрĕ кашласа,
Те хуçи ун кайрĕ тулашса —
Кăшкăрнă пек туйăнчĕ пĕр хушă,
Хăвалать, ятлать, сасси хăрушă...
Ку сăмах, ан тив, чăнах та мар,
Уншăн халĕ шуйханас та мар:
Йывăçа упрас тени-çке хаклă,—
Çĕр-анне ан юлтăр тытамаклă!

ПОЭТ ЙЫХРАВĔ

Вăранăр, тапранăр,
чăваш çыннисем!
К. Иванов

Умăмра — Константин Ивановăмăр бюсчĕ,
Сăнĕнче — тарăн шухăш куллен:
«Савнă халăх, ан йăшчĕ, ан юсчĕ, ан тусчĕ—
Патшаран хăраса ан куклен.
Халиччен тўснине тепĕртак эсĕ тўсчĕ —
Амăрткайăк пек паттăр çĕклен!

Тўсессе чăнахах та тўсме питĕ йывăр —
Пусарать тĕрлĕрен терт-инкек.
Çутталла туртăнса, анлăраххăн çул хывăр —
Хăвăра хăвăр туйăр çын пек!
Тĕттĕмре, мĕскĕнре, эй, тăванăм, ан çывăр!
Иксĕлмен-ха санра та кĕрнек.

Сăмахна, юрруна, тĕрру́не сăнасамччĕ —
Вĕсенче çитмĕл çичĕ тĕспе
Йăлкăшать çивĕч ăс та илем асамачĕ,
Ырă чун ăшăтать ăшшипе.
Вĕсене тимлĕрех упрама ан мансамччĕ,—
Хăватланăн вĕсен сассипе.

Çитмĕл çичĕ илем йăлтăрса—пурте пайăррăн
Савăнтартăр хăвна, тĕнчене.
Кĕнеке шанчăклах ĕнтĕ эсĕ тупайрăн —
Тек ăна ан çитер ĕнене.
Килтĕр хамăрăн Пушкин та, Гете те Байрон,
Сăвăлатăр чăвашăн чунне.

Эй, вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисемĕр!
Кĕрешмесĕр килмест ыр кунçул.
Ёмĕрхи тымара вăй ку́рсе чĕрĕлсемĕр,
Талпăн, халăх, йышран эс ан юл!
Çивĕчреххĕн янратăр юратнă чĕлхемĕр,
Тĕнчери ăс-халпа туслă пул!

Лăпланмасть сăвăçсен яланхи çак йыхравĕ.
Кам-ха тивĕç ун пек йыхăрма?
Çав йыхрав — чĕрĕ пурнăçăн аслă шыравĕ,
Çавă мар-и çĕклет юррăма?
Тан тапса тухнă пек тухтăр халăх хуравĕ
Пархатарлă малашлăх курма!..»

Иванов сассипе янкăрах шуçăмланчĕ
Пирĕн сăвă тĕнчи терт-хĕнре.
Чăвашри сăвăçсен кĕреки пуянланчĕ,
Ивановăмăр халь те — тĕпре.
Калчаланчĕ чăвашăн çĕр те пĕр таланчĕ,
Ун сасси те янрать тĕнчере.

ҚАНАШ ÇУЛЕ

Канаш çулĕ, аслă çулĕ,
Ик айккипе йывăçлăх та —
Куçпа та пăхсан, куç савăнать,
Куçпа пăхсан, куç савăнать,
Шухăшласан, чун савнать.

Гаврил Федоров.

Шупашкартан Канаш енне
Автобуспа çӳретĕп-и —
Курса шоссемĕр илемне,
Ыр кăмăлпа хĕретĕп эп.

Килентерет çул тăршшĕпе
Яка асфальтăн сарăмĕ.
Юхса юлать ик енĕпе
Вăрман пек йывăç ярăмĕ.

Сĕлтет-и хурăн лăссине
Çынсем çулпа иртмессерен —
Хăйне ӳстернĕ хуçине
Вăл ыр сунать пек чĕререн...

Канаш çулне хывни çинчен
Хыпарĕ юлнă халапа.
Çĕкленнĕ халăх — ялсенчен,
Ăна хăпартнă алăпа.

Лаша турттарнă чул-тăпра,
Шаккана мăлатук шак-шак!
Çапса хытарнă, тет, вара
Чул çитмесессĕн — пур шакмак!

Ял-ял юратнă йывăçне
Лартса хăварнă, тет, кунта:

Йӑмра, юман та вӗрене,
Пур чӑрӑш, хурӑн та.

Республика урамӗ пек,
Çӗн çул ярт ӳкнӗ аякка.
Хальччен курман сарӑмӗпе
Вӑл выртнӑ çирӗп те яка.

Канаш çулне канашласа
Çапла-мӗн тунӑ халӑхӑм.
Çӗкленнӗ вӑйӗ капланса
Хастарлӑнрах утмалӑх ун.

К а н а ш сӑмахӑн тупсӑмне
Татах вӑл курнӑ куçкӗрет.
Халь ӗнтӗ çитмӗл çич енне
Ун пек çул пирӗн вирхӗнет.

Канашӑн-пӗрлӗхӗн сасси
Ан йӑнтӑрччӗ халӑхӑмра.
Вӑл мар-и пурнӑç ӑнасси?
Телей пиллет вӑл хамӑра.

ÇАЛТӐР КАЛАРӖ...

Çур çӗр иртрӗ. Вӗçрӗ ыйхӑм —
Ӗнтӗркевӗм.
Муталарӗ хуйхӑм-суйхӑм
Шалкӑм евӗр.

Лартӑм, утрӑм унӑн-кунӑн,
Тӑвӑр — пӳлӗм.
Тарӑхса кӳлешрӗ чунӑм
Çавраçиллӗн.

Чăнк! та чăнк! тутарчĕç акă,
Çиçрĕ çиçĕм.
Ашкăнса çӳрет-ши тахăш?
Тен — савниçĕм?

Пытăм пăхрăм кантăк витĕр:
Çутă çăлтăр
Каллĕ-маллĕ вĕçрĕ иртрĕ
Йăлтăр-йăлтăр!

«Мĕн сĕнксе ларатăн? — терĕ.—
Тух, тăванăм!
Тен, хуйха чуну çĕнтерĕ —
Хавасланăн.»

Тухрăм. Вăл калать йăвашшăн:
«Савнăç тупăн —
Эсĕ чăрсăр ĕç тăвасшăн
Пит ан хыпăн.

Тĕнчене сăна-ха, тусăм:
Терчĕ — чиксĕр...
Вак-тĕвекшĕнех ан усăн,
Пурăн шиксĕр.

Хăвшăн çеç тесе ан пурăн,
Çун — çынсемшĕн.
Туллирех телей эс курăн
Ыр ĕçсемшĕн...»

Кăн-кăвак — каçхи тавралăх,
Сывлăш — ирĕк.
Чун — каллех юмарт вăй-халлă,
Кăмăл — çирĕп.

ВУТĂШПИ

Хуллен ишетĕп çăмăл кимĕпе,
Пыратăп авăсса кĕсменĕмпе.
Çитмен кунта паян çил ачисем —
Кӳлле хумхантармаççĕ-ха вĕсем.
Тӳлек. Илтеймĕн нимĕнле сасса —
Шăй-шай юрлинччĕ кайăк, иçмасса,
Ытах пуçтах çăрттан кӳкĕрчене
Хускалтарин кăштах енчен енне.
Тавралăхпа пыратăп киленсе,
Анчах кас-кас илетĕп шикленсе:
Шывран е кӳл хĕрри хăвалăхран
Пике сиксе тухас пек ăнсăртран.
Ах, Вутăшпи, курасчĕ ман сана!
Курнатăн имĕш хăв саван çынна.
Çапах та тĕл пулас килет пĕрре
Чи хӳхĕм пӳллĕ-силлĕ сар хĕре.

ТАВЛАШУ

Халăх юмахĕ

Пулнă, тет, çакă тахçан, сĕм-авал —
Ларнă ун чух патшара кăвакал.
Туслă, тет, пулнă çерçи шăшипе —
Çил вĕриччен ик айван хушшипе.
Тупнă вĕсем тул пĕрчи пĕринче,
Темшĕн вара пайлайман çав пĕрче.
«Эпĕ çием!» те «Çук, эпĕ çием!»—
Тенĕ-тавлашнă хĕрсех хайхисем.
Иккĕш çапла харкашса йăлăхсан:
«Чим! — тет çерçи.— Чарăнсам,
тăхтасам!
Пур вĕçен кайăк тухайтăр манпа,
Пур утан кайăк тухайтăр санпа.

Хăшĕ çĕнтерĕ — çав тухĕ мала,
Çав эшкере тул пĕрчи пулмалла».
«Юрĕ!»—тет леш, çерçипе килĕшсе.
Пухăнчĕç пурте кĕçех ĕрлешсе,
Тухрĕç вара аслă хир варрине,
Тухрĕ пĕр çар тустарма теприне.
Тытăнчĕç акă хăр-хар çапăçма:
Хыттăн чышма та хаяррăн çапма.
Шăй та шаях тулхăрса тытăçсан,
Вĕçрĕ тĕк-çăм, мăкăрланчĕ тусан.
Тулă пĕрчишĕн тусса-хирĕнсе,
Çапăçрĕç-çапăçрĕç — пĕтрĕç тӳнсе.

ВЫÇĂ КУÇ

Халăх юмахĕ

Пурăннă, тет, пуянкка,
Пулнă, тет, вăл наянкка.
Çакăскер пĕррехинче
Çăшкăрать кĕпер çинче:
— Михĕ ылтăншăн чуна
Парăттăм,— тет,— шуйттана!..
Мăйракаллă тус-шуйттан
Ак сикет тухать таçтан.
— Мĕн çӳрен,— тет,— янрашса,
Янрашса та анрашса?!
— Михĕ ылтăншăн чуна
Парăттăм, теп, шуйттана.
Мулăм çук та — ыйхăм çук,
Мулăм пулсан — хуйхăм çук...
Шуйттан калать, хайхискер:
— Апла пулсан — килĕшер:
Эсĕ мана чунна сут,
Ил ылтăнна, йăт та ут...

Татрӗçӗ те сăмахне,
Кайрӗç шуйттан шăтăкне.
Шуйттан калать: — Тултар,—тет,—
Йăтма кăна пултар,— тет.
Çыннăн куçпуç чарăлать:
Ылтăн купи ялтăрать!
Ак тултарчӗ çын мула
Аран-аран йăтмалла.
Мекӗрленсе йăтрӗ те,
Ик-виç утăм турӗ те —
Лашт! çеç кайрӗ йăванса,
Выртрӗ çавăнтах кăнса.
Ылтăнне те, чунне те
Вара шуйттан илнӗ, тет.

«ЮРА АРЧИ» ЯРАМРАН

ПАРНЕ

Парнелерӗ асанне
Ытарми арча пире —
Пӗчӗкскер те ылтăнскер.
Арчи ылтăн çăраллă,
Çăри ылтăн уçăллă,
Уççи хамăр алăра.
Çавă ылтăн арчара
Çӗр пин юрă упранать.
Çав арчана уçар-и,
Йăлтăр-йăлтăр арчари
Йăнкăр-йăнкăр юррине
Янăратса ярар-и?
Чун-чӗре тăваннине
Вӗçтерер-и юрăпа?
Юрла-юрла ывăнсан,
Ытла сӗнксе лариччен
Такмакласа илер-и?

ЫЛТĂН ҚАЙĂҚ

Асăмри инçетлĕхре,
Қăн-кăвак сенкерлĕхре,
Хура вăрман палăрать,
Шухăша ялан ярать.
Тарăн варсенчен иртсен,
Чăтлăха пырса кĕрсен,
Уçланка тухатăн та —
Ылтăн чăрăш пур унта.

Ылтăн унăн лăссисем,
Ылтăн ун йĕкелĕсем.
Тăрринче ун кайăк пур,
Тĕлĕнтермĕш те маттур.
Сассипе вăл илĕртет:
«Ăс илмешкĕн килĕр!»—тет.

Хура вăрман — çут тĕнче,
Тĕрлĕ йывăç йышĕнче
Ылтăн чăрăш — халăхăм,
Ытарми пахалăхăм.
Қайăк — унăн ăс-халĕ,
Унсăр сăну çухалĕ.
Çитеесчĕ ун патне,
Илеесчĕ ун ăсне.

Харсăр ĕмĕт — йăлтăр-йăлтăр,
Татать ыйхăма, ялан илĕртет.
Алтăр Çăлтăр — çичĕ çăлтăр,
Çич хут каласан, сăвап пулать, тет.
Чарăнмасăр каламашкăн
Вăй-хал ытларах, ай, кирлĕ иккен.
Такăнмасăр талпăнмашкăн
Ăс-хал ытларах, ай, кирлĕ иккен.

ÇИЧЮТА МА КАЯС?

Акмасăр тырă шăтнине шыраса,
Таçта çичюта ма каяс?
Акмасăр вăл нихăçан шăтас çук.
Ах, çук, çук-çук, шăтас çук,
Тăван килĕмрен хаклă кил пулас çук.

Çапмасăр авăн çапнине шыраса,
Таçта çичюта ма каяс?
Çапмасăр вăл нихăçан çапнас çук.
Ах, çук, çук-çук, çапнас çук,
Тăван ялăмран хаклă ял пулас çук.

Пĕр вутсăр çăкăр пиçнине шыраса,
Таçта çичюта ма каяс?
Пĕр вутсăр вăл нихăçан пиçес çук.
Ах, çук, çук-çук, пиçес çук,
Тăван çĕрĕмрен хаклă çĕр пулас çук.

Çăлтăр витĕр çул-йĕрпе
Тухрăм кайрăм талкăшса.

Уйăх витĕр уй-хирпе
Утрăм-утрăм кĕрт ашса.

Хĕвел витĕр сар хĕрпе
Ырă куртăм савăшса.

АЛ ТУТРИ

Ах, савни, савни!
Çук санран хыпар.

Астăватăн-и,
Улахран тухса,
Алăран тытса
Утрăн юнашар.

Эсĕ те мана
Юратан тесе,
Патăм эп сана
Шурă ал тутри.
Хытă савтăр-и,
Терĕм тĕрлесе.

Те тĕрри ытла
Тĕссĕр пулчĕ-ши?
Мĕншĕн халь апла
Каласан салхун?
Мĕншĕн сăмахун
Сĕврĕлнĕ ăшши?

АТТЕ-АННЕ КĔТЕТ

«Атте-аннемĕр çурчĕ — хулăн çурт,
Эпир килте çукран илемĕ çук...»
Чăнах, çапла теме сăлтавĕ пур,
Апла марах темешкĕн майĕ çук.

Пӳрт пĕрени те çĕрĕшме пăхать,
Хапха юпи те чалăшать иккен.
Манассине сунмастăмăр вĕт-ха
Сăпка сиктернĕ савнă кил çинчен.

Анне çулсеренех пĕкĕрĕлет
Шыв кĕвенти пĕр вĕçĕм пуснăран.
Атте сăн-пичĕ час пĕркеленет
Вăрçăранпах шăмшакĕ сурнăран.

Хавхаланса мăнаçлă ĕмĕтпе
Салантăмăр çĕршывăн талккăшне.
Ӳркев пусать-ши канлĕх хӳттипе? —
Вăр-вар çитместпĕр хамăр ял тĕлне.

«Пире килте атте-анне кĕтет,
Таянайса çемçе минтер çине».
Пехиллесе, ай, хăварасчĕ, тет,
Ыр пурăнăç сунса, ачисене.

Асаттесен ăс-халĕ çĕтесрен
Пăшăрханса шураççĕ çӳçĕсем...
Атте-анне пилне тивĕçмесрен
Ӳпкелешме ан тивтĕр-и, туссем?

ЛЕКÇЕЙ ПИЧЧЕ

(Кави Латыповран)

Лекçей пичче пит шӳтлет,
Қăмăлне шӳтпе сиплет.
Хах-хах-ха та хих-хих-хи
Қултарать ун сăмаххи.
«Çитĕ!» — теççĕ ачасем,
Вар тытса кулаç хăйсем.
Тутарсем те чăвашсем —
Юлташсем, тус-тантăшсем
Тинкереççĕ куçĕнчен,
Йăлăхмаççĕ шӳтĕнчен...

Ак пырать вăл урампа,
Пушă мар — транзисторпа.
Куç хĕсет те хăй сана —
Шӳт-халап итле кăна!
Андриян та унпала
Ал тытнă-мĕн тăванла.

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Ку кайсан Шупашкара,
Леш тӗл пулнӑ урамра.
«Уҫлӑха пӗрле вӗҫер! —
Тенӗ лешӗ чип-чипер.—
Пулӑшӑп, пит шикленсен...»
Ку каланӑ итлесен:
«Ҫук, тӑванӑм Андриян,
Пыраймастӑп-ха паян.
Ман хӑмла ӳстермелле,
Хам ӗҫе ӗлкӗрмелле.
Йӳнеҫеймӗп вӑхӑтран,
Эп паллашрӑм ӑнсӑртран
Пӗр хастар ученӑйпа.
Аптӑрарӑм эп унпа:
«Атя ҫырар кӗнеке,—
Тесе сӗнет тек-текех.—
Ҫӗршыва пит кирлӗ,— тет.—
Пысӑк усӑ кӳрӗ»,— тет.
Пӑрӑнса епле тӑрас,
Ҡӑмӑлне ма хӑварас?
Андриян, эс кай, вӗҫтер,
Салама илсе ҫитер.
Тен, парса ярам сӑра?
Илсе кай та уҫлӑхра
Хӑнала марсиана,
Ҡучченеҫ пулин ӑна.
Ҡилӗшетӗн-им апла?
Ма пӑхан кула-кула?..»

Лекҫей пичче пит шӳтлет,
Ҡӑмӑлне шӳтпе ҫӗклет.
Ак пырать вӑл хулапа,
Пушӑ мар — транзисторпа.
Хыттӑнах чӗнет, пуплет:
«Шӳт сутатӑп! Ҡам илет?
Ҡулӑ вӑл — чӑн-чӑн эмел.

Шӳтлеме тупар-и мел?
Çĕр çинче те уçлăхра
Шӳтпеле хаваслăрах».

Лекçей калать: «Чăн-чăнах
Курнă эп Насретдина.
Çул çӳрерĕмĕр унпа:
Вăл — ашакпа, эп — утпа.
Эх, юмах яра-яра,
Ырă куртăмăр вара!
Çĕклентерме çын чунне
Юптартăмăр юмахне.
Яхăлтатрĕç ачасем,
Ахăлтатрĕç ватăсем.
Савăнтарчĕç парнепе:
Насретдина — шур кĕпе,
Хӳхĕм кăкшăмĕ — мана.
Йыхăраççĕ хăнана:
Кĕтсе тăрăпăр, терĕç,
Сăра ярса пыр, терĕç.
Эп каларăм вĕсене,
Хамăн хаклă туссене:
«Çĕр çинче те уçлăхра
Шӳтпеле хаваслăрах».
Насретдин калать иккен:
«Ан мухтан, мĕн-ма тесен,
Эп те шӳтсĕр çӳремен,
Шӳтсĕр ман пĕр кун иртмен.
Ашакăмпа сан уту
Пулччăр туслă та тату.
Çул çӳреччĕр юнашар,
Çывăхраххăн туслашар.
Шӳт нихçан иксĕлес çук,
Эпир унччен вилес çук.
Çĕр çинче те уçлăхра
Шӳтпеле хаваслăрах...»

Çул çӳрет Лекçей пиччe,
Ывăнмасть вăл çул çинче.
Вăл çитет Шупашкара,
Хусана анать вара.
Мускава та вĕçтерет,
«Российăра» * çĕр çĕрлет.
Парĕччĕ вăл, ахăртне,
Çул телейĕшĕн чунне.
Тус-юлташ патне час-час
Çӳремешкĕн вăл хавас.
Тĕрĕллĕ кĕпе çире,
Сухалли çитет çĕре.
Юратса çиет шăрттан,
Ютшăнмасть вăл юр-вартан.
Хăй иккен вăл сулахай,
Тĕлĕнтермĕшĕ нумай:
Сулахай алпа çиет,
Сылтăммипе шыв ĕçет.
Калаçать вăл кулăшла:
«Апла мар,—тет вăл,—капла».

«Йывăç» тет вăл хăмана,
«Тусăм» тет вăл ачана,
«Çамрăк тусăм» тет ватта,
Куç хĕсет, кулать тата...
Тĕлĕкре те вăл шӳтпех
Аташать çĕр каçипех...

Ак пырать вăл пасарпа,
Пушă мар — транзисторпа.
Йăл кулать, куç хĕскелет:
«Шӳт сутатăп! Кам илет?
Çĕр çинче те уçлăхра
Шӳтпеле хаваслăрах!..»

---

* «Россия» гостиницăра.

ПУРНĂÇ ЙЫВĂÇĔ АН ХĂРТĂР!

ТӰЛЕККĔН СЫВЛАЙМĔ...

Қаллех вăрçă-харçă тесен,
Тӳлеккĕн сывлаймĕ поэзи —
Этемлĕхĕн сывă сасси.

Қаллех вăрçă-харçă тесен,
Хаяррăн сас парĕ поэзи —
Этемлĕхĕн паттăр сасси.

Қаллех вăрçă-харçă тесен,
Янрать хытăраххăн поэзи —
Хуплантăр вут-вăрçă сасси!

ПУРНĂÇ ЙЫХРАВĔ

Вут-вăрçă хыпарĕ илтсессĕн,
Фронтра пуçне хунă салтакăн
Шур çӳçлĕ ват амăш чĕри
Епле ан хускалтăр, ыраттăр?
Нихçан та пирчеймĕ суранĕ.

Вут-вăрçă хыпарĕ илтсессĕн,
Юратнă çыннисĕр юлайнă
Пĕччен, тăлăх арăм чĕри
Епле ан хускалтăр, ыраттăр?
Нихçан та пирчеймĕ суранĕ.

Вут-вăрçă хыпарĕ илтсессĕн,
Хăр-тăлăх ӳссе-çитĕнсе
Çын пулнă хĕр-ывăл чĕри
Епле ан хускалтăр, ыраттăр?
Нихçан та пирчеймĕ суранĕ.

Вут-вăрçă хыпарĕ илтсессĕн,
Ыр ĕмĕтпеле хавхаланнă
Хастарлă яш-кĕрĕм чĕри
Епле ан хускалтăр, ыраттăр?
Вăл тăнăçлă пурнăçшăн тăрĕ.

Вут-вăрçă хыпарĕ илтсессĕн,
Кĕтретлĕ çак пурнăç хунавĕ
Пиллен ача амăш чĕри
Епле ан хускалтăр, ыраттăр?
Вăл тăнăçлă пурнăçшăн тăрĕ.

Вут-вăрçă хыпарĕ илтсессĕн,
Телейлĕ кунçулшăн вăй хунă
Пур аслă ăру чун-чĕри
Епле ан хускалтăр, ыраттăр?
Вăл тăнăçлă пурнăçшăн тăрĕ.

Вут-вăрçă хыпарĕ илтсессĕн,
Илемлĕ тĕллевшĕн ĕç тытнă
Сыв чунлă, ĕрчевлĕ этемлĕх
Епле-ха вăрça ан сивлетĕр?
Ун туртăмĕ — пурнăç йыхравĕ.

ЧУЧЧУ

А. Миттова асăнса

Чуччу... Чуччу тесессĕн,
Чун çĕкленет вĕçессĕн,

Ачалăхăн илемĕ,
Ҫамах ăна иленмĕ!..

Ват йăмрасем кашлатчĕç,
Атте пек ачашлатчĕç.
Тăсмак парка турачĕ
Чуччу йăтса тăратчĕ.
Пĕррех тапса яратăн —
Пӳлĕниччен ярнатăн.
Ҫӳле чу! ыткăнатăн,
Ҫĕре те чу! анатăн.
Чун ҫӳҫенет хавассăн —
Ҫун пек телей пулмассăн.
Таса — тӳпе сенкерĕ,
Чуччу унтах ҫитерĕ.
Юр пĕрчи пек эс ҫăмăл,
Сипленнĕ санăн кăмăл...
Ачалăхăн илемĕ,
Ҫамах сана иленмĕ!

Анчах вутланчĕ анăç,
Хупланчĕ ҫавă савнăç.
Хĕвел те тĕксĕмленчĕ,
Йăмра та кичемленчĕ,
Чуччу тăрать салхуллă,
Тамалнă янкăс кулă.
Аттемĕрсем инҫеччĕ,
Вута кĕрсе тӳнетчĕç.
Тертленчĕç аннесем те —
Ҫанса курман вĕсем те.
Ачасене те вăрҫă
Ачалăхсăр хăварчĕ.
Ĕҫе пит ир вăл кӳлчĕ —
Ҫу вырăнне хĕл пулчĕ.
Черчен шăмшак суратчĕ,
Чуччу... пушах тăратчĕ...

Паян каллех йăмралăх
Уявлă, ăраскаллă.
Чуччу — чĕкеç вĕçевĕ,
Çĕклет, чăмать вĕçе-вĕç!
Хĕвел кулать ачашшăн,
Телей — ача-пăчашăн...
Анчах вĕсен телейĕ
Пиртен нумай килейĕ.
Хĕрӳ хĕвелĕн тĕлĕ
Ан пултăр вупăр-пĕлĕт!
Хура вăя сирсемĕр,
Хаяррăнах хирсемĕр! —
Çапла чуччу хистевĕ,
Çунма хушать вут евĕр.
Ӳнпа хĕрсе çӳретĕп
Килте те, ĕçĕмре те.
Ача-пăча шăй-шайĕ
Янратăрччĕ пĕр шаййăн.
Чуччу кирек ăçта та
Чăррик! чăррик! сас патăр!

ВУТ КУÇНЕ — ШЫВ!

Тырă-пулă акса, пурнăçа сиплеме
юрататăп,—
Эпĕ çын аллинчи çăкăра хапсăнма
пултараймăп:
Уй-хирсен пурлăхне вут ан хыптăр тесе
ал пусатăп.

Кĕмĕл тĕслĕ кермен тӳпене çĕклеме
юрататăп,—
Эпĕ çын йăвине сĕмсĕрле йышăнма
пултараймăп:

Йăлтăрти çуртсене вут ан хыптăр тесе
ал пусатăп.

Мир кĕввиллĕ станок умĕнче ĕçлеме
юрататăп,—
Киленӳллĕ, хавасла ĕçрен ютшăнма
пултараймăп:
Çакă ĕç хатĕрне вут ан хыптăр тесе
ал пусатăп.

Уçлăхри сĕмлĕхре çĕнĕ çул-йĕр хывма
юрататăп,—
Çунатсем пур çинче эп вĕçмесĕр тăма
пултараймăп:
Уçлăхра та ыр туслăх ан пĕттĕр тесе
ал пусатăп.

Кăмăл хĕрнĕ чухне çĕнĕ юрă хывма
юрататăп,—
Чун кĕвви хистевне итлемесĕр тăма
пултараймăп:
Вăрçă ĕçĕ мана тек ан кĕттĕр тесе
ал пусатăп.

Ёмĕрсен еткерне юп курса упрама
юрататăп,—
Эп ăна вăрçăра çунтарса кĕл тума
пултараймăп:
Этем тунă илемлĕх ан çĕттĕр тесе
ал пусатăп.

Савнă çыннăм ытамĕ савса кĕтнине
юрататăп,—
Çĕнĕ чун пӳрекен çак асамсăр юлма
пултараймăп:
Вут çине ăна вăрçă ан вăртăр тесе
ал пусатăп.

Ачасен сассине, вăййине-куллине
юрататăп,—
Эп ăна кăвартан сыхламасăр тăма
пултараймăп:
Пурнăç йывăçĕ ĕмĕр ан хăртăр тесе
ал пусатăп.

Сар хĕвел çутине, ешĕлкке тĕнчене
юрататăп,—
Алхасан вут куçне шыв сапмасăр юлма
пултараймăп:
Тĕнче тĕнĕлĕ шанчăклă тăтăр тесе
ал пусатăп.

САПҚА ЮРРИ

Марине хĕрĕме

Çывăр, çывăр, ылтăнăм,
Эс вылянă — ывăннă.
Қайрĕ сар хĕвел канма,
Чупрĕ çил те çывăрма.
Янкăрах сенкер тӳпе,
Уйăх сарă тетте пек.
Вăл тӳлеккĕн янăрать,
Лăпкăн çывăр, тет сана.
Шавламаççĕ йăмрасем,
Лăплансам эс, тĕлĕрсем.
Ярăнма-çке юратан,
Ярăнсам, эппин, тата.
Мĕншĕн эс тапкалашан,
Мĕншĕн эсĕ кармашан?—
Уйăхпа вылясшăн-им,
Çăлтăра тытасшăн-им?
Çитĕнсем халь сăпкара,

Ӳсӗн — пулӑн уҫлӑхра:
Анӑн уйӑх тӳремне,
Ҫитӗн ҫӑлтӑрсем ҫине...
Ҫывӑр, пӗчӗк ылтӑнӑм,
Эс выляна — ывӑнна.

Эй, ҫӗршывӑм, ӗнен ывӑлна!
Ах, ӑҫтан-ха, ӑҫтан-ха сана
Хур тӑвам, терт сунам, шар кӳрем?
Мӗншӗн пистӗр санран чун-чӗрем?
Харкам хӑйӗн — ҫуралнӑ йӑви,
Тӗс кӳрет те имлет ун кӗвви.
Манас ҫук сан сӑпку юррине,
Манайсан — курас ҫук ыррине.

Кипарис ҫитӗнмест сив енче,
Чул ҫеҫ выртӗ тӑшман хӗвӗнче.
Эпӗ санӑн — ӳтленнӗ тӑпру,
Эпӗ сан — ху пилленӗ тупру.
Эпӗ сан — ҫӳҫ пӗрчи таранччен,
Эпӗ сан — чун сӳнсе лариччен!
Сан ятна яраяссӑм пулсан,
Чыссӑра кӑларассӑм пулсан,
Хӑрса лартӑр ман алӑ-ура,
Куҫ-чӗлхем те путлантӑр вара!

Ял тӑрӑх уҫҫӑн янӑрать пуль
Курак сасси халь ирсерен.
Сӗлкӗшленсе юр пусӑрнать пуль
Куллен хӗвел хӗрӳллӗрен.

Тен, çитрĕ шăнкăрч та хавассăн
Ман шултăрканă вĕллене.
Ăна курса сывлать пуль ассăн,
Мана аса илсе, анне.

Пӳрт умĕнчи йăмра ĕречĕсем,
Сан тунсăхна сиссе, анне,
Мана аса илеççĕ пуль. Вĕсем
Ан ӳпкелеччĕр ывăлне.
Ыр ĕçшĕн хурăп вăй-хала:
Çынна телей кӳни — телей.
Сана-и манăп е тăван яла?
Пĕлсем: ача чухнехиллех
Ман халĕ те йăмра туратти нчен
Шăхличĕ ăсталас килет,
Чăваш чунне çĕн сăн кĕни çинчен
Ăшра çĕн кĕвĕ йăл илет.

ÇУРХИ ВĂРМАН

Сывах-и, аван-и,
Епле пурăнан,
Халаллă тăванăм —
Хунавлă вăрман?

Укаллă-алкаллă
Çӳл шĕшкĕ тĕми
Манпа — алла-аллăн —
Пуплет йăлăхми.

Эсех парнеленĕ
Чечеклĕх — умра.

Чечекĕн чеченĕ
Чĕм чĕртрĕ манра.

Лăс çумăр, сасартăк
Çитсе вăрмана,
Им сапрĕ — шăварчĕ
Мĕнпур таврана.

Туратăн-туратăн
Шăрça витĕрсе,
Йăлтах-мĕн çутатнă,
Ёлккен сăн кӳрсе.

Ав, шăпчăк хавассăн
Пикенчĕ юрра —
Чарса чарăнмассăн
Мухтать çумăра.

Ӳпкевсĕр кив çулçă
Куçать тăпрана —
Пулинччĕ çул уçă
Патвар папкана!..

Вăрманăм-тăванăм,
Сыв пул халлĕхе.
Сыв пул, ан хурлан эс,—
Эп килĕп каллех!

Сар улăха утатăп,
Сар чечексем савни пек çепĕç,—
Кăмăлăма тӳрех сиссе,
Ачашшăн çупăрлаççĕ,
Асăрхануллăн сĕртĕнеççĕ...

(Ах, улăхсем!
Ыйтмасăрах килетĕп,
Ыйтмасăрах каятăп,—
Тен, йывăр пуль сире
Çапла кĕтсе илме,
Çапла уйăрăлма?!.)

Сĕм вăрмана васкатăп,
Ем-ешĕлскер, аппа пек вашават,—
Аппа алли пек çепĕç çулçăсем
Шухăшăма туйса илеççĕ,
Мана лăплантарасшăн
Хулпуççирен хуллен лăпкаççĕ...

(Ах, вăрмансем!
Ыйтмасăрах килетĕп,
Ыйтмасăрах каятăп,—
Тен, йывăр пуль сире
Çапла кĕтсе илме,
Çапла уйăрăлма?!.)

Шур пĕлĕтсем çине вĕçетĕп,
Вĕсем анне пек ырă кăмăллă,—
Çемçе тӳшек сарса параççĕ,
Пашт! çеç кĕрсе выртатăп ун çине,
Эп вилнĕ пек çывратăп,
Сĕм юмахри ыр канăçа куратăп...

(Ах, пĕлĕтсем!
Ыйтмасăрах килетĕп,
Ыйтмасăрах каятăп,—
Тен, йывăр пуль сире
Çапла кĕтсе илме,
Çапла уйăрăлма?!.)

Хирсем пыраççĕ пушанса,
Комбайн вырнă пусăра

Сар хăмăл çеç ылтăнланса
Шăрт пек курнать йĕри-тавра.

Шап-шур ларатчĕ çĕрулми,
Паян вăл тăкнă чечекне.
Тăри те пулчĕ юрлами —
Çухатрĕ мар-и сассине?

Е авăтать-и путене,
Е кукуруза çывăхра
Сĕлтет-и вăрăм çилхине —
Çӳрес килет курса вăрах.

МАЛТАНХИ ВĔРЕНТЕКЕНСЕНЕ

Пире атте-анне,
Пур кăмăлтан савса, кунçул кӳрет,
Илет хăй хӳттине,
Çемçе чĕрçи çинче çитĕнтерет.
Кăшт вăй пухатăн та —
Шăнкрав сасси чĕнме пуçлать шкула:
Сан вуламашкăн та,
Çырма та шутлама хăнăхмалла.
Пуçра вăл шут сахал —
Çеремлĕх илĕртет тухса чупма,
Вăрманĕ — чăтлăха,
Çӳл ту айкки — йăрр! ярăнса анма.
Пĕлместĕн-ха пачах
Кунçул ĕçе сана та кӳлессе,—
Çӳрен, ача-пăча,
Çилпе те хĕвелпе çеç киленсе.
Кĕçех туйса илен:
Тĕп çул шкул витĕрех выртать иккен.
Унта кăна пĕлен —
Пĕрре çеç мар, çĕр пин илем тĕнчен.

Ах, йывăр вулама!..
Аран-аран кукăрчăксем чĕрен...
Ăшпиллĕн пулăшма
Ялан пырать вара вĕрентекен.
Пире, шĕвĕрсене,
Анлантарма тӳрех мел çитмесен,
Чи кирлĕ сăмахне
Çĕр çывăрми шырас пулать вĕсен.
Манатпăр тав тума,
Часах тухса каятпăр тĕнчене.
Чухлатпăр хаклама
Кайран кăна вĕçев пуçламăшне.
Кайран çеç, инçетре,
Асра эс, малтанхи вĕрентекен.
Тайма пуçах сире,
Ыр ĕçĕмĕр — сире парне пиртен!

ИРХИНЕ

Ирхине хула урамĕ
Пӳрт урайĕ пек таса:
Çулçă-хут выртни курнаймĕ—
Тирпейленĕ-мĕн шăлса.

Сывлăм сыпăн, пур çĕрте те
Нӳрĕ курăк ешерет.
Бульварпа, скверпа иртетĕп—
Кĕлчечек шăрши кĕрет.

Эпĕ тĕлĕксем тĕлленнĕ
Мамăк вырăнăм çинче,
Теприсем ĕçе пикеннĕ
Шурăмпуç шураличчен.

Ашăмра эп тав тăватăп
Ашшăн-ăшшăн вĕсене.
Хăвăртрах çитме васкатăп
Хамăн ĕçĕм вырăнне.

КАҚШАМ

Савнă Йăлăм хырлăхĕ —
Савнă енĕм ырлăхĕ.
Куçăм тулли — курмалли,
Тĕлĕнмелли — ум тулли.
Хыр вуллисем çурта пек,
Турачĕсем чĕнтĕр пек.
Пĕчĕк уртăш йывăçне,
Ҫипарис евĕрскерне,
Ачашлас килсе тăрать —
Таçтанах ăмсантарать:
Ярпаять йăрăсланса,
Тăпăлкка чăмăртанса.
Вăр-вар курман кайăк та
Курма пулать вăрманта.
Тутанса, тархасшăн, кур:
Йăпанма çырли те пур.
Чечекĕсем ку тĕлте
Çитмĕл çичĕ тĕрлĕ те.
Чĕлтĕрти çеç тупалак
Çăлтăр евĕр сăнпала
Куç умне ялан ӳкет —
Хĕрлĕ хĕм сапса ӳсет.
Уçă сывлăш — чи ырри,
Çĕклентерет вăл пурри:
Йăлăхаймăн сывласа,
Кайăн эсĕ сывалса.
Ҫил ăшшиллĕ çуртсенче —
Лăштăр канăçлă тĕнче.

Ан ӳркен — тухса çӳре,
Чӑмпӑлтат эс кӳлӗре...
Ҫам кӑна кунта канмасть,
Вӑй илмест те савӑнмасть!
Сиплӗ Йӑлӑм хырлӑхӗ —
Савнӑ енӗм ырлӑхӗ!
Тӗреклетрӗн сывлӑха,
Вӑй парса чылайлӑха.
Эпӗ çакӑ парӑма
Епле пӗлем тавӑрма?
Тарлӑ ӗçре вӑл, эппин,
Татӑлайса пытӑрин.

САПАЙЛАХПА ЧУРАСЛАХ

Валем Ахуна

Этемлӗх йӑх-яхӗ,
Ун чӑрсӑр сӑмахӗ,
Пикенӗ çапма.
Ытах май килсессӗн,
Вӑл хатӗр çиллессӗн
Пуçхӗрлӗ çакма.
Мулне те пухасшӑн,
Чапа та тухасшӑн
Таптать вӑл çынна.
Ҫалаçӗ япшаррӑн,
Çапах та хастаррӑн
Ҫӗмест сан хутна.

Анчах чурӑс чунӑн
Ҫӗске — савнӑç кунӗ,
Шӑтать ун хӑмпи.
Пин хут чыслӑ мар-и
Ыр ӗç пархатарӗ?

Ун вăрăм — шăпи.
Ан тив, тертлĕ пулĕ
Сăпайлăхăн çулĕ —
Хĕнре пиçĕхет.
Тымарĕ ун тарăн,
Тупмашкăн пултарăн
Унпа чăн пехет.

КУПАССА

Г. Моклакова

Шыв трамвайĕ шавсăр вĕçтерет,
Қăкшăмран васкать Шупашкара.
Пулăпа çырла шăрши кĕрет,
Хĕвĕшӳ лăпланчĕ салонра.
Алăк патĕнчи кĕтесĕнчен
Ян çĕкленчĕ купăсăн сасси.
Ёнтĕрке пуçланă сăнсенчен
Хăвăрт иртрĕ ыйхă пусасси.
Çуталса йăл кулчĕç те çынсем
Қăмăллăн сăнарĕç пĕр-пĕрне.
Купăсçă, кĕвве шăратнăçем,
Лăпкăн çех юрларĕ юррине.
Хăй—çулланнă çын-мĕн, суккăрскер,
Вăл пуçне тытайнă çӳлерех.
Ахăр, хăй те уçă чунлăскер:
Вашаватлăх йăлкăшать питре.
Ун çемçе сасси тивет чуна,—
Савăнтăр, тет пулĕ, халăх та,
Хаклăр, тет, çак тăнăçлă куна,
Хăтлăх кӳрĕр пӳрнĕ вăхăта...
Мăшăрĕ те хутшăнчĕ юрра,
Йăпшăнать хай купăсçă çумне.
Ыттисем те пулăшрĕç вара,
Ёнĕрлерĕм эп те çеммине.

Шурă шупăр уртсан улмуççи,
Савăнтартăн мана, чун уççи:
Пырăп, терён, курма кĕр енне
Эсĕ ман тулăх сад илемне...
Сирĕлмест асăмран çав самант.
Эс чуна çав тери ан амант:
Савнă тусăм, пĕлсем, халь садра
Йăмăхать-çке çырла шакăрах,
Сан куçу пек хура хурлăхан
Путрĕ эсĕ çукран хурлăха,
Хĕрлĕ питлĕ анис улмасем
Пуç тайсах-çке кĕтеççĕ — килсем!

Тунсăхлă пĕр кăмăл
Курăнчĕ пирте:
Каласма та çăмăл,
Чунăм хĕпĕртет...

Юратса курман та
Пĕтĕм кăмăлтан,
Савăнса пăлхантăм,
Кайрăм эп ăнтан.

Темĕнле сăваплăх
Çупăрлать чуна.
Ман мĕнпур яваплăх
Парăнать ăна.

Çурхи кун çитессĕн,
Ăшă — таврара.
Терт-хĕне çĕнессĕн,
Вăй вĕрет юнра.

Çамрăклăх илемĕ
Черченкке, таса...
Пуç тайса илем-и,
Ăшшăн куç хывса?

Эй, раштав хĕвелĕ,
Тĕлпулушăн — тав!
Пултăрччĕ телейлĕ
Пирĕн çак пăлчав.

«ТĂРИ» ЯРĂМРАН

Илес килет сана ачашшăн
Хĕрӳллĕ ытама, чĕрем çумне.
Кĕрес килет ман ăшшăн-ăшшăн
Йăлкăшакан куçсен сенкерлĕхне.

Эс ман кичем чуна çутатрăн,
Çутатрăн ман салху кунçулăма.
Манра эс чĕрĕлĕх вăратрăн
Татах ыр кăмăллă, таса пулма.

Ман ырату хăшпĕр çынна
Хăлха илтми сас çеç чухне
Çумра, савниçĕм, эс кăна,
Пĕр эс илтен чун хурлăхне.

Йăлăнасси вăл маншăн ют,
Унра-и çыннăн пархатар?
Пулар-и, тусăм, çиçĕм-вут?
Юнпа чун витĕр юратар.

Ҫичем — çыру илмен чухне те
Чуну савса тăран хĕртен.
Вара эс пурнăç илемне те
Ĕненейми пулса çитен.

Вара хăвна кăна шанатăн,
Хупа ху çеç эс йӳнеçен.
Çапах та танлăн пурăнатăн,
Ху тĕллĕн юратса пĕччен.

Пĕр-пĕчченçĕ пурнăçра
Ыратуллă, юратуллă
Ĕмĕр уйрăлми юрра
Юрласассăн — кăмăл тулĕ.

Çухату та пулнă ман,
Шанчăках шанатăп эпĕ.
Юратма юратнăран
Çамрăк чун янравлă, çепĕç.

Эс мана аса илен-ши,
Эп сана асилнĕ пек?
Пĕтĕм чун сана иленчĕ
Мĕнпур пек хĕрӳлĕхпе.

Ҫаҫарсамччĕ эп Блок маршăн —
Сӳрĕк, сӳрĕк-ҫке чĕлхе.
Пурпĕр саншăн, ыр сăнаршăн,
Кӳрĕттĕм ҫепĕҫлĕхе.

Ҫĕрхи калча кĕрен те симĕс,
Чĕлтĕртискер — ачаш, чечен.
Темме-ҫке: «Иртнĕ вăхăт килмĕ»,—
Тесе хурлантăн пĕрреччен.

Эп, хурлансан та, хуҫăлмарăм,—
Те ҫухату ҫеҫ курнăран?
Юхатчĕ пĕлĕт ярăм-ярăм,
Таҫта чĕнсе ку тăрăхран...

Вăрман аса килет-и халĕ
Тĕл-тĕл саралнă лăссипе —
Иртеҫ пек иккĕн алла-аллăн
Паян та унăн ҫумĕпе.

Ҫаллех чуна кĕрет салхулăх,
Ҫаллех сана курас килет.
Хăҫан, хăҫан сана тĕл пулăп
Ҫил ытамне тухма пĕрле?

Сана мĕнпе-ши тав тăвам эп
Манпа пулнишĕн чунупа?

Телей-мĕн, пуринчен аван-мĕн
Туспа утмашкăн пĕр çулпа!

Ман тунсăх — эс, хавхалану та,
Эс манăн манăçми тупа.
Кашни сăмах, кашни çĕн утăм
Йăлтах вăл санăн ятупа.

Пулаймăп сирĕн уй-хирте,
Иртеймĕп ялăр çумĕпе.
Тен, иккĕн уйрăлнă çĕрте
Хупланчĕ пулĕ çеремпе
Чĕрсе эп çырнă савнă ят.
Сана парне тăвас тесе,
Пухаймăп эп утмăлтурат.
Ача пекех хĕпĕртесе,
Çĕкленейсе çĕн ĕмĕтпе,
Итлеймĕн лăпкă сăвăсем.

Тӳпе хупланĕ пĕлĕтпе
Е тăрĕç яр-уяр кунсем —
Тухса çӳреймĕпĕр хире,
Чун ыратсан та — савăнса.
Асилӳпе çеç инçетре,
Тем ырă килессе шанса,
Пурнатăп шăппăн, пĕр-пĕччен.
Сĕм каç килет те çил асса,
Пралук-юпа янрать çинçен,
Асар-писеррĕн антăхса.
Никам та çук пек тĕнчере,
Пĕр сан сăну çеç юмахран
Килсе кĕрет те — инçетре
Çӳрет, ютшăннă пек манран.

Сан ятна асăнман-асилмен кун иртмерĕ,
Сан яту çеç янрать, асăмра çĕкленсе.
Çутă кун пек сăну куçăмран сирĕлмерĕ,
Тепринпе хупланса-витĕнсе.

Эп сана ун çинчен систерме пĕлеймерĕм,
Эп хăрарăм эс ман кăмăлтан писесрен.
Чи ачаш сăмахпа юрăсем кĕвĕлерĕм,
Сан патна ăнтăлса инçетрен.

Куçа-куçăн юлма санпала курнăçасчĕ,
Палăртасчĕ чунри сивĕнмен туйăма.
Манăн çăлтăр пек сан чĕрӳне вырнаçасчĕ,
Эс вырнаçнă пек ман чунăма.

Кунçулăн тăршшĕне карта-карта,
Салхуллă маятник шаккать тӳлек çуртра.
Кас-кас çил кĕрлесе иртет тулта,
Вут-хĕм вĕркенĕ пек хĕрӳ каланккара.

Илтеймĕн манăн тăлăх сассăма,
Вăрах кураймăп тунсăхлă куçусене.
Чăнах та, йывăр пулĕ калама
Мана эс мĕн, сана эп мĕн кӳрессине?..

Çапах юрлатăп эп хавхаланса,
Çапах илемлĕн юлтăн эс чунра, ăсра,
Çапах та, ĕмĕт çитессе шанса,
Шыратăп темĕскер, ырмастăп пурнăçра.

Çара уй-хир кунта,
Каллех тăман кăна.
Пуласчĕ çумăнта,
Илтесчĕ сассуна.

Тинех çĕкленĕ хал,
Çурхи шыв-шур пек, ман.
Ĕçе иленĕ ал,
Ĕçрен вăл ютшăнман.

Тулта шап-шур тăман,
Тăпах йăмра-тирек...
Пĕр эс — хĕвелĕм ман,
Пĕр эсĕ — ман тĕрек.

Манăн чӳречемĕн кантăкĕ
Янкăр тăрă та сенкер-сенкер.
Чăнахах та юратан-тăк эс,
Ан пытар та ан иккĕлентер.
Канăça çухатрĕ çулăм —
Тăвăр каланкка салхуллă.

Йăлăнмастăп ним те эп санран—
Йăлăнни усса килеймĕ.
Пурăн тӳрĕ кăмăллăн ялан,
Пул телейлĕ те илемлĕ.

Çавăн пек кирлех пулсан,
Каламан сăмах юлайтăр
Ёмёр каламасăр ман,
Урăххи савса калайтăр.

Тус тупасчё тесе ырнăран-тăр—
Тунсăх çеç, çук ўпкев, хапсăну.
Асăмра сан яту çеç янратăр,
Хёвеллентёр умра çут сăну —
Эпё çак телейпех савăнатăп,
Чунăмпа ăшăнса витёрех.
Эп хама ăнланмасăр шанатăп
Эс пёрле пуласса пурпёрех.

Чун-чёремён туртăмне
Сисеймерён, пёлеймерён.
Шурă çёмёрт çеçкине
Эп сана парнелеймерём.
Яшлăх юлё инçетре,
Юр кайсан, садсем вăй илёç.
Ёмёрлёх ёмётёмре
Юлăн эс çёмёрт çеçкиллён.

Эп сана маниччен
Пёччен чух та пёччен
Юлас çук,

Кичем чух сĕм-кичем
Пулас çук —
Çеçке çурĕ чĕрем
Чунăмри садăмра
Шап-шурах.

ТАВТАПУÇ САНА, ТĂВАНĂМ!

М. М-на

Маншăн савнăç—эс пуласшăн
Манпала пĕрле ялан.
Килсе кур эппин, тархасшăн,
Чиперккеçĕм, ан вăтан.

Ах, инкек иккен—выртсассăн
Шап-шурах палатăна,
Ёмĕтсем йăлт татăлсассăн,
Пĕр-пĕччен туйсан хăвна.

Тавтапуç сана, тăванăм,
Тайма пуç чунтан-вартан.
Чĕрĕлет хĕвеллĕ шанăç,
Сирĕлет кичемлĕх ман.

Савасса санах саваттăм,
Пытарса чун туртăмне.
Тĕксĕм тĕс кӳме хаймастăм
Санăн çутă телейне.

Пĕтĕм япала халь маншăн
Хаклăрах унченхинчен...
Тунсăх авăрне путмашкăн
Тӳсĕм кирлĕ мар иккен.

Маитăм эп пĕчченлĕхе те,
Нишлĕ — тăр-пĕчченçĕ чун.
Улăхри сенкерлĕхе тек
Утмăп тăлăххăн, салхун.

Лăпкă, вашаватлă çилĕн
Çăмăл ытамне тухсан,
Çĕмĕртсен шап-шур çеçкиллĕн
Чун чечекленет паян.

Сана нумай-нумай шырарăм
Пин-пин хĕр-тантăш йышĕнче.
Чун кĕтнĕ чух эс тупăнмарăн,
Тăратăн халь — куç умĕнче.

Шăпа пĕр мар пĕрле утмашкăн,
Мĕнех пултарăп калама?
«Май çук сан çумăнта пулмашкăн,
Хал çук савмасăр та тăма» *.

Эп сана сивлерĕм тӳрккесрех,
Ăшшăн калаçа пĕлмерĕм эпĕ.
Эс мана юратрăн пурпĕрех,
Пурпĕрех манпа пуплерĕн çепĕç.

Ăнсăртран паян та эс темме
Тĕл пулассăн туйăнан, тăванăм.
Кӳрентернĕшĕн «каçар» теме
Мĕнлерех пĕлес-ши халĕ манăн?

* Юлашки икĕ йĕрки А. Передреев сăввинчен. (Автор асăрхаттарни.)

Ӳпкелетӗн эп сивӗннӗрен,
Сӑлтавне ялан манра куратӑн.
Сивӗ сӑмахпа кӳрентерен,
Ашӑ кӑмӑла сирсе яратӑн.

Телейӳн ем-ешӗл йывӑҫне
Ху касатӑн — ан ятла мана ҫеҫ...
Вӑйлӑ тӑм ӳкет-и каҫхине —
Чечексен те ҫеҫкисем шанаҫҫӗ.

Хӳтӗлеймерӗм эп сана
Манран эс хӳтлӗх кӗтнӗ чух.
Пӗчченлӗхӗм пӑвать чуна,
Анчах та эсӗ ӗнтӗ — ҫук.

Ҫук мар-ха эсӗ тӗнчере,—
Пӗлсех тӑратӑп ӑҫтине.
Анчах хӑймасть-ҫке чун-чӗре
Ҫитсе тӑма сан хӳттӳне.

Тахҫантанпах эп тунсӑхланӑччӗ —
Ҫухалтӑн эсӗ шухӑ кунсенче.
Таҫтан тӗл пултӑн халӗ ӑнсӑртран —
Каллех саламлӑн йӑл кулса тӑран.
Каллех ман чунӑм ҫамрӑк та хастар,
Ырми-канми кӳрес пек пархатар.
Тӳпе тӗслех сенкер кӗпеллӗскер,
Тӳпе пекех эс хаклӑ та чипер.

ТУПМАЛЛ

Тымарсем

Улăпсем 3
Разин чĕлĕмĕ (халăх халапĕ) . . . 4
Вăрман амăшĕ 5
Поэт йыхравĕ 6
Канаш çулĕ 8
Çăлтăр каларĕ 9
Вутăшпи 11
Тавлашу (халăх юмахĕ) . . . . . —
Выçă куç (халăх юмахĕ) 12
«Юрă арчи» ярăмран 13
Парне . . . . . —
Ылтăн кайăк 14
«Харсăр ĕмĕт—йăлтăр-йăлтăр...» . —
Çичюта ма кайяс? 15
«Çăлтăр витĕр çул-йĕрпе...» . —
Ал тутри . . . . . —
Атте-анне кĕтет 16
Лекçей пичче (Кави Латыповран) . 17

Пурнăç йывăçĕ ан хăртăр!

Тӳлеккĕн сывлаймĕ 21
Пурнăç йыхравĕ . . . . . —
Чуччу 22
Вут куçне — шыв! 24
Сăпка юрри 26
«Эй, çĕршывăм, ĕнен ывăлна!..» . . . 27
«Ял тăрăх уççăн янăрать пуль...» . . . —
«Пӳрт умĕнчи йăмра ĕречĕсем...» . . 28
Çурхи вăрман . . . . . —
«Сар улăха утатăп...» 29
«Хирсем пыраççĕ пушанса...» . . . 30
Малтанхи вĕрентекенсене 31
Ирхине 32
Кăкшăм 33
Сăпайлăхпа чурăслăх 34
Купăççă 35

Сивёнмен сăмахсем

«Шурă шупăр уртсан улмуççи...» . . 36
«Тунсăхлă пёр кăмăл...» . . . . . —
«Тăри» ярăмран 37
«Илес килет сана ачашшăн...» . —
«Ман ырату хăшпёр çынна...» . 38
«Кичем—çыру илмен чухне те...» . —
«Пёр-пёчченçё пурнăçра...» . . —
«Эс мана аса илен-ши...» . . 39
«Кёрхи калча кёрен те симёс...» —
«Пулаймăп сирён уй-хирте...» . 40
«Сан ятна асăнман-асилмен кун иртмерё...» 41
«Кунçулăн тăршшёне карта-карта...» —
«Çара уй-хир кунта...» . . . 42
«Манăн чўречемён кантăкё...» . —
«Йăлăнмастăп ним те эп санран...» —
«Тус тупасчё тесе ырнăран-тăр...» 43
«Чун-чёремён туртăмне...» . . —
«Эп сана маниччен...» . . . —
Тавтапуç сана, тăванăм! . . . 44
«Сана нумай-нумай шырарăм...» . . 45
«Эп сана сивлерём тўрккесрех...» . . —
«Ўпкелетён эп сивённёрен...» 46
«Хўтёлеймерём эп сана...» . . . . —
«Тахçантанпах эп тунсăхланăччё...» . . —

10 пус.

Геннадий Юмарт
(Геннадий Федорович Трофимов)

ОПОРА

Стихи

Для старшего школьного возраста

На чувашском языке

ИБ 1337

Редактор Р. В. Бородкина. Художник В. Н. Гончаров. Художественный редактор Е. Е. Михайлова. Технический редактор А. Ф. Никитина. Корректор Р. П. Кудряшова.

Сдано в набор 16.08.82. Подписано к печати 28.02.83. НТ 22196. Формат 70×90¹/₃₂. Бумага типографская № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 1,50. Усл. печ. л. 1,75. Усл. кр.-отт. 1,93. Учетно-изд. л. 1,93. Тираж 1500 экз. Заказ № 3609. Изд. № 97. Цена 10 коп. Чувашское книжное издательство, 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4. Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли. 428019, Чебоксары, Канашское шоссе, 15.